## Вырăнти хăй тытăмлăх: *Оринин ял тăрăхĕ*

# Хальхи вăхăтра уйрăмах пĕтĕçӳлĕх кирлĕ

***Иртнĕ суйлавра 2011 çулхи март уйăхĕнче Оринин ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансем ял тăрăхне ертсе пыма Александр Сергеевич ВОЛКОВА шанчĕç, ытларахăшĕ уншăн сасăларĕ. Унтанпа çулталăк ытла вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Мĕнле хак парать хăйĕн çак тапхăрти ĕçне-хĕлне ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, мĕнле ыйтусене татса пама май çитернĕ, мĕн пирки ытларах ĕçлемелле тесе шухăшлать? Çак тата ытти ыйтусем çине хурав пама ыйтрăм эпĕ Александр Сергеевичпа тĕл пулнă май.***



**– Александр Сергеевич, калаçăва çакăнтан пуçлас килет. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ сирĕншĕн çапах та çĕнĕ ĕç пулса тăрать. Мĕнле йывăрлăхсемпе тĕл пулма тиврĕ малтанах? Пĕтĕмпех унччен палăртнă пек пулса пычĕ-и?**

– Ялта пурăнса курман çын мар эпĕ. Хĕллехи вăхăтра чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри вăл ял çыннишĕн – çулсене юртан тасатса тăрасси. Манăн та пĕрремĕш кунран тенĕ пекех çак ĕçе кӳлĕнме тиврĕ. Ялĕсем вара сахал темелле мар – 14. Сăмах май ял тăрăхĕн территорийĕнче 2 ял хуçалăх предприятийĕ, 8 магазин, 2 шкул, 3 Культура çурчĕ, 1 ача сачĕ, 4 фельдшерпа акушер пункчĕ, пекарня, «ЛитСтройМаш» ООО. Çапла вара чи малтанах пур 14 ялĕ патне çеç мар, ял хушшисемпе те çулсене уçса тăма тытăнтăмăр. Ахăртнех тата çанталăкĕ те çил-тăман енĕпе чухăнах пулмарĕ. Вырăнти ял хуçалăх предприятийĕсен техники çине шаннипе нимех те тума май çук. Çул-йĕр организацийĕпе çыхăнса ĕçлеме тиврĕ. Паллă ĕнтĕ, укçасăр мар.

Çурхи кунсем çитнĕ май хĕлĕпе пухăннă пĕтĕм тасамарлăх çиеле тухать. Юр кайса пĕтнĕ май территорисене, ял хушшисене, урамсене, обществăлла вырăнсене тасатса тирпейлессин, йĕркене кĕртессин ыйтăвĕ кун йĕркине куçрĕ. Пур ялта та тенĕ пекех кая юлмасăр граждансен пухăвĕсене йĕркелерĕмĕр. Тĕп ыйту – тасалăхпа тирпейлĕх, ялсенче каçхи хурал тăрассине йĕркелесси, кĕтӳ кĕтме тухасси, килĕшӳсем, страховкăсем тăвасси т. ыт. те. Çынсемпе тĕл пулса калаçнин, ку е вăл ыйтăва ăнлантарса панин усси пысăк. Хамăр патăмарти йĕркелĕх, хамăрăн пурнăç мĕнле пулассиытларах хамăртанах килнине ытларахăшĕ тĕрĕс ăнланса илни палăрчĕ.

**– Çу кунĕсем çитсен ытларах çĕрте ялсенче çынсем шыв çитменнипе аптăранине курма пулать. Сирĕн патра ку ыйту çивĕчлĕхĕ еплерех?**

*КĔСКЕ СПРАВКА. А.С. Волков 1955 çулта çуралнă, Чамăш ялĕнче пурăнать. 1974–1976 çулсенче çар службинче пулнă. 1977 çулта Шупашкарти планпа экономика техникумне вĕренсе пĕтернĕ. 1977-1982 çулсенче Арзамас хулинче КБУ УКБП бухгалтерĕ, каярахпа аслă бухгалтерĕ пулса ĕçленĕ.*

*Хыççăн хăйĕн ĕç биографине «Моргаушагропромхимия» обществăпа çыхăнтарнă. 1982–2006 çулсенче унăн тĕп бухгалтерĕнче тимленĕ, 2006–2008 çулсенче – исполнительнăй директор. 2008–2009 çулсенче «ФорумАгро» ООО генеральнăй директорĕ пулнă, 2009–2010 çулсенче халăх çыравне ирттерессин районти уполномоченнăйĕнче ĕçленĕ.*

– Малтанах çавна каласа хăварасшăн. Шыв башнисем (вĕсем пурĕ 16), шыв пăрăхĕсен системи хальхи вăхăтра «Оринино» тата «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕсен харпăрлăхĕ шутĕнче. Башньăсене те вĕсемех пăхса тăраççĕ. 14 ялта кашнинчех водопровод системи пур. Хальлĕхе çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерсе тăрассипе ун пек пысăк пăтăрмахсемех пулман.

Шыв тенĕрен, кашни ялтах е ял çывăхĕнчех пĕвесем пур. Хăш-пĕр ялта вĕсем 2–3 те. Вĕсене пурне те ял çыннисем хăйсемех пăхса тăраççĕ, пысăк мар юсав ĕçĕсене те туса ирттереççĕ. Кунсăр пуçне пирĕн территорире 3 плотина.

**– Çу кунĕсенче пушар тухас хăрушлăх та ӳсет. Унччен пушар сӳнтермелли машинăсене ял хуçалăх предприятийĕсем тытса тăратчĕç. Хуçалăхĕсем арканса-саланса кайнă майĕпе пушар машинисем те хуçасăр тăрса юлчĕç, çухалчĕç, ку службăсем саланчĕç. Оринин тăрăхĕнче ку енĕпе лару-тăру мĕнле пулнине пĕлес килет.**

– Ку ыйту унччен пирĕн патра çивĕч тăнине пытармастăп. Халĕ вара уçăмлăх пур ĕнтĕ. ЧР Пурлăх министерстви урлă çар чаçĕнчен юрăхсăра тухнă ятарлă техника илсе килме май тупрăмăр. Çак вăхăта ăна юсаса йĕркене кĕртрĕмĕр, мĕн кирлипе комплектларăмăр, ĕçлеттерсе пăхрăмăр. Юлашки утăм кăна юлчĕ темелле – пушарниксен штатне йĕркелесси.

**– Çăва-масар таврашне кирлĕ шайра тытса тăни те пĕлтерĕшлĕ самантах пулса тăрать.**

– Ку тĕрĕсех. Пирĕн ял тăрăхĕнче 2 масар. Çулленех вĕсен территорийĕсене тасатса тирпейлесе тăратпăр. Иртнĕ çул та кивĕ тата хăрнă йывăççене касса тирпейлесе тухрăмăр.

Кунсăр пуçне выльăх масарĕсем 7. Вĕсем тĕлĕшпе санитари нормисене пăхăнни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. 7 масартан 4-шне хӳме тытса çавăрман пулнăччĕ. Пĕрлехи вăйпа ку ĕçе пурнăçлама май килчĕ.

Йывăççем лартассине манăçа кăлармастпăр. Кăçал çуркунне çанталăк меллех пулманнипе ку ĕçе туса ирттерме май килмерĕ. Çитменнине çуркунне лартнă йывăççенчен ытларахăшĕ хăрать. Çавăнпа та йывăççене ытларах кĕркунне лартса хăварма тăрăшатпăр. Акă иртнĕ çулхи кĕрхи кунсенче Мулкаччассипе Тереç ялĕсем хушшинчи çул хĕррипе лартнă йывăççен тăрăхне çĕнетсе тухрăмăр, çĕнĕрен лартрăмăр. Ял администрацийĕнче вăй хуракансен, «Восток» тата «Оринино» хуçалăх ĕçченĕсен вăйĕпе 500 тĕп чăрăш лартрăмăр.

**– Республикăра пур ял патне те асфальт сарнă çул çитерме ятарлă программа йышăннăччĕ. Ку программа сирĕн патăрта пурнăçланнă теме пулать-и?**

– Ялĕсем патне çулĕсем пур темелле. Халĕ тата 1,3 километр тăршшĕ «Волга» – Мулкачкасси – Оринин çулне тăвас ĕççем те сарăлса пыраççĕ. Анчах та çул ыйтăвĕ кунпа кăна вĕçленмест-ха. 14 ялтан 2-шĕнче кăна хальхи вăхăтра асфальт сарнă йĕркеллĕ çул пур. Ыттисенче ку ырлăха ĕмĕтленмелли кăна юлать. Вырăнти бюджет шучĕпе çул тăвасси вара хальхи вăхăтра пурнăçлама май çук япала.

Çӳлерех асăнтăм ĕнтĕ кашни ялтах пĕвесем пур тесе. Ку мĕне пĕлтерет-ха? Ялсем çырма-çатраллă вырăнсенче вырнаçнă. Çулсене кирлĕ шайра тытса тăма питĕ йывăр. Уйрăмах çурхи ейӳ е кĕрхи йĕпе-сапа вăхăтĕнче ял çыннин шар курма тивет. Мулкачкасси ялĕнчи Уралекки урамĕнче, Вăрманкассинчи Северная урамра, Сентимĕр ялĕнче те çулсене йĕркене кĕртессипе ĕçлемелли çук мар. Унта пурăнакансен пăшăрханăвне ăнланатăп. Шел те, пĕтĕмпех укçа-тенкĕ çитменнипе çыхăннă.



*Эсир сăн ӳкерчĕкре «Оринино» хуçалăхри сĕт-çу фермине ертсе пыракан Раиса Блиновăна куратăр. Раиса Ананьевна хăйĕн тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланипе пĕрлех обществăлла ĕçре те хастар. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна нумаях пулмасть «Ядринмолоко» уçă акционер обществин Хисеп грамотине парса чысларĕç.*

Çывăх вăхăтрах татса памалли тепĕр ыйту вăл – Çĕньял Орининти çĕнĕ урама электрификацилесси. Тереçре вара трансформатор подстанцине урăх вырăна куçарас пулать.

**– Александр Сергеевич, нумаях пулмасть Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 67 çул çитнине паллă турăмăр. Чăн-чăн уяв туса пама май килчĕ-и ветерансене?**

– Ял тăрăхĕн территорийĕнче хальхи вăхăтра Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем 5 çын тата вĕсемпе танлаштарнисем 2 çын пурăнать. Майăн 9-мĕшĕ умĕн вĕсенчен кашнин патĕнчех килĕсенче пултăмăр, уяв ячĕпе саламларăмăр, чысларăмăр, парнесем патăмăр, ăшă сăмахсем каларăмăр. Мĕншĕн тесен пĕрле пухăнса ирттерекен уявсене хăшĕпĕри тухса та çӳреймест ĕнтĕ.

Савăнăçлă уяв митингне Оринтинта майăн 9-мĕшĕнче ирттертĕмĕр. Владимир Александров ертсе пыракан Оринтинти Культура çурчĕ çумĕнчи ветерансен хорĕ пуян концерт программипе савăнтарчĕ. Сăмах май В. Александров республика тулашĕнче те лайăх пĕлекен «Шуракăш» ансамбле те ертсе пырать.

Уявсем тенĕрен, пирĕн халăх ĕçлеме кăна мар, савăнма та пултарнине палăртнă пулăттăм. Юлашки вăхăтра ял уявĕсене хатĕрленсе ирттересси йăлана кĕчĕ. Вĕсене Оринтинта, Сентимĕрте, Атапайĕнче, Çеменкассинче çуллен йĕркелетпĕр.

Акă Троица – чиркӳ уявĕ. Ăна пĕтĕм халăхпа Оринтинта кăнтăрла уявларăмăр. Çав кунах каç кӳлĕм Сентимĕрпе Атапай ялĕсенче Троица уявĕсем ирттертĕмĕр. Августăн 19-мĕшĕнче Оринтинта пан улми Спасĕпе пĕрлех ял уявне те йĕркелетпĕр.

**– Патшалăх çĕр ĕçченне тĕрлĕ енлĕ пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерет пулин те, ытларах çĕрте пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кăна мар, уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче те выльăхсен йышĕ чакса пыни сисĕнет. Сирĕн шутпа мĕне пĕлтерет ку, ял çынни çĕр ĕçĕнчен писетри и тата хăвăр патра лару-тăру ку енĕпе мĕнлерех?**

– Палăртрăмăр ĕнтĕ, нумай çĕрте пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем арканса-ваклanса пĕтрĕç. Пирĕн патра вара икĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх та тытăнса тăнине, япăх мар ĕçлесе пынине ырламалла кăна. Çав вăхăтрах, чăнах та, ял çыннисен хуçалăхĕсенче тытса усракан выльăхсен йышĕ палăрмаллах чакни сисĕнет. Уйрăмах çакна майракаллă шултра выльăхсен йышĕ пирки каламалла. Юлашки 4–5 çул хушшинче вĕсен шучĕ сахалтан та çуррине яхăн чакни паллă.

Халĕ шухăшласа пăхар. Ял çынни ĕне выльăха тытса усраса мĕнле тупăш илме пултарать-ха? Чи малтанах сĕт хатĕрлесе панинчен. Анчах халĕ вара вĕсен хакĕ патне таврăнар. Тивĕçлĕ хакпа туянмаççĕ вĕт-ха ăна ял çыннисенчен. Çав вăхăтрах ытларах ял çыннин килти хушма хуçалăхран илекен пĕтĕм тупăшĕ те çавă кăна. Кам-ха вара хăйшĕн тăкак тӳссех выльăх тытса усрама тăрăшĕ? Патшалăх шайĕнчех ку тĕлĕшпе йĕрке туни кирлĕ.

Ял çыннисенчен сĕт пухассине вара кашни ялтах йĕркеленĕ. Хăшĕсем продукцие райпо урлă ăсатаççĕ, теприсем уйрăм предпринимательсене параççĕ.

Çапах та ял пурнăçне пĕтĕмпех тĕксĕм сăрăпа сăрлас кăмăл çук. Çĕр ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинче те пуçаруллă, мал курăмлă çынсем пурри савăнтарать. Вĕсем йывăрлăхсене çĕнтерме, ерипен пулсан та, малаллах аталанма мехел çитереççĕ.

Акă Валерий Смирнова илер. Хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелерĕ. Ерипен аталанса пынă май техникине те туянчĕ. 55 гектар çинче тулă, нумай çул ӳсекен курăксем акса çитĕнтерет, çĕр улми лартса тăвать. Халĕ унăн хуçалăхĕнче 2 трактор, кăкарса ĕçлемелли техника хатĕрĕсем çителĕклĕ. Хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ май пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене те пулăшма ӳркенсе тăмасть. Вăт çавăн пек пуçаруллă та хастар çынсем ытларах пулсан тем пекех.

**– Александр Сергеевич, сăмах пуçаруллă та хастар çынсем çине çитрĕ пулсан хăвăрăн ĕçре тĕкĕ пулса тăракан вырăнти депутатсем, старостăсем пирки пĕр-икĕ сăмах асăнса хăварсамăр. Кун пеккисем пурах пулĕ.**

– Паллах кун пеккисем пур, сахал та мар. Ял тăрăхĕ умĕнче тăракан задачăсемпе ыйтусене вĕсемсĕр ниепле те ăнăçлă татса пама май çук. Ку вăл пĕтĕмпех пĕрлехи ĕç пулса тăрать. Депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсем пулма 11 çынна суйланă, старостăсем 14-ăн. Халăх суйланă çынсем – шанчăклă çынсем. Чылайăшĕ вĕсенчен халăх шанăçне тӳрре кăларас тесе чунне парса тăрăшать. Акă Михаил Просов, Геннадий Шарапов, Светлана Люцева, Анатолий Казамбаев депутатсем, Тереç ялĕнчи Валерий Шишокин, Мулкачкассинчи Алексей Бычков, Оринтинти Вадим Васильев, Çĕньял Орининти Герман Котельников, Вăрманкассинчи Михаил Федотов, Пиккикассинчи Галина Моисеева старостăсем тата ыттисем пирки чи ырă сăмахсем кăна калама пултаратăп.

Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем Валерий Вязовпа Виталий Иванов та пирĕн патрах. Ял тăрăхĕн пурнăçĕпе вĕсем интересленсех тăраççĕ, кирлĕ пулăшу пама та ӳркенмеççĕ. Валерий Иванович Оринин ял тăрăхĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашне те ертсе пырать. Канаш членĕсене кашни уйăхрах пĕрле пухать вăл, пĕлтерĕшлĕ ыйтусене яланах пĕрле канашласа татса параççĕ. Паллă ĕнтĕ, пĕрлехи ĕçре пысăк вăй пулса тăраççĕ вĕсем.

**– Александр Сергеевич, хамăрăн калаçăва вĕçленĕ май мĕнле сĕнӳ-канаш тавраш е пĕлтермелли пур сирĕн?**

– Çавна кăна каласа хăварас кăмăл пур. Пĕрпĕрне ăнланса, шанса, пулăшса ĕçлесе пыни кирлĕ. Вăрттăнлăх мар, хăшĕ-пĕри критиклеме, евитлеме питĕ маçтăр. Анчах та пĕрле пухăнса кар тăрса ĕçлес чухне вĕсене ку йышра курма çук. Манас марччĕ: хамăрăн пурнăçа лайăхрах, ăнăçлăрах тăвас тетпĕр пулсан, ытларах хамăр çине шанас пулать. Аслă тăсса ларнипех пурнăç ырă еннелле улшăнаймĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**